Обществăлла выльăх-чĕрлĕх фермисем хĕл умĕн

# Продуктивлăха чакарас марччĕ

Статья ятне кăларнă тĕллевпе ĕçлеççĕ паян малашлăха пăхакан, «АПКна аталантарасси» наци проектне пурнăçа кĕртессипе вăй хуракан ял хуçалăх производство кооперативĕсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсем. Ĕçлеççĕ те ӳсĕм чиккисене çĕнсе пыраççĕ, аталанăвăн çĕнĕ формисене алла илеççĕ. Паян пĕрлешӳллĕ хуçалăхсен фермисем хĕле хатĕрленеççĕ. Хĕле кĕрес умĕн ку таранччен кам, мĕн тата мĕн чухлĕ ĕçленине тишкерер-ха.

Кăçалхи сакăр уйăхра районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем алă усса лармарĕç темелле, çапах та кăтартусем иртнĕ çулхи çак вăхăтринчен чакрĕç. Мĕнре вăрттăнлăхĕ, мĕн туса çитерейменрĕмĕр, хăш технологие алла илейменрĕмĕр? Ыйтусем нумай. Вĕсем çине эпир паян тулли хурав парайман производство чакасси хĕл кунĕсенче те хăйĕн утăмĕсене чакармĕ. Ку вăл районăн ыранхи кунĕпе çыхăннă. 2008 çулхи январь-август уйăхĕсенче районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем пĕтĕмпе 100 гектар ял хуçалăх çĕрĕ пуçне 33,6 центнер аш-какай (пĕлтĕрхипе танлаштарсан 80,1 процент), 169,2 центнер (86,3 процент) сĕт туса илнĕ. Çакă вăл пĕтĕмĕшле производство çинче те курăнать. Çулталăк пуçланнăранпа хуçалăхсем пĕтĕмпе туса илнĕ продуктивлăх та пĕлтĕрхинчен пĕчĕкрех. Çапла вара пирĕн хуçалăхсем кăçал пурĕ 1462,8 тонна (79,1 процент) аш-какай, 7357,4 (85,3 процент) тонна сĕт туса илнĕ. Çакăн çине выльăхсен йышĕ пĕчĕкленни те витĕм кӳрет. Сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне кăçал пирĕн хуçалăхсем мăйракаллă шултра выльăхсен йышне пĕлтĕрхинчен 1280 пуç, ĕнесен кĕтĕвне 506 пуç, сыснасен йышне 7435 пуç сахаллатрĕç. Çаксем хыçĕнче мĕн тăрать тата: эпир ĕçлеме пĕлменни е çĕр-шыври хаксен шайлашăвĕ хресчене майлă пулманни? Каллех пĕр енлĕ хурав çук, мĕншĕн тесен пĕрешкел условисенчех ӳсĕмлĕ ĕçлекенсем те пур. Акă кăçалхи лару-тăрура та «Свобода», Суворов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕсемпе «Лидер» агрофирмăра мăйракаллă шултра выльăхсен, «Агро-урожай» хупă акционерлă обществăра сыснасен йышне хушнă, «Восток», «Герой», К. Иванов яч. хис.,Ильич яч. хис., «Оринино», «Свобода», Суворов яч. хис., Чкалов яч. хис. хуçалăхсенче ĕнесен кĕтĕвне унччченхи шайрах сыхласа хăварнă. Çак ӳсĕмсене выльăх-чĕрлĕх патĕнче вăй хуракансем хĕл кунĕсенче хавшатас мар тесе ĕçлеме хатĕр-и? Ăна валли обществăлла выльăх-чĕрлĕх фермисене технологие кура хĕле хатĕрленĕ-и? Çак ыйтусем çине хурав парас тĕллевпе çула тухрăмăр та эпир иртнĕ кунсенче.

Эпир çитнĕ пĕрремĕш хуçалăх вăл Суворов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕ пулчĕ. Кунти Çатракассинчи ĕне тата сысна фермисенче пулсан хуçалăх çу кунĕсене вăйă-кулăра ирттерменни, çитес хĕл тапхăрне çанă тавăрса хатĕрленни курăнать. Паянхи куна асăннă хуçалăх 720 тонна (101 процент) утă, 2412 тонна (120 процент) сенаж янтăланă. Сарайсене дезинфекциленĕ, витесем пĕтĕмĕшле таса курăнаççĕ пулин те, шуратмалли уйрăм вырăнсене шуратнă, хĕле хатĕрленĕ. Çавăнпа та Анаткасси тăрăхĕнчи выльăх тăмалли витесене кĕрсен тухас та килмест. Акă Любовь Львовна Яковлева нумай çул хушши ертсе пыракан Çатракассинчи сысна фермине кĕрсенех кунти сарайсенче сывлăш уçă пулни сисĕнет. Çакна валли фермăра кăçал районта пĕрремĕш хут пӳлĕмсене вентиляцилемелли устройство вырнаçтарнă. «АПКна аталантарасси» нацпроект пулăшăвĕпе пурнăçланă çак ĕç сарайсене типĕ тытма май парать. Ку фермăна «2007 çулхи чи лайăх сысна ферми» тата Л. Яковлевана «2007 çулхи сысна фермин чи лайăх заведующийĕ» хисеплĕ ятсем пани ахаль пулманни фермăра кашни утăмрах курăнчĕ. Ферма коллективĕ те хăйĕн ĕçне ответлăха туйса пурнăçлани палăрчĕ.

– Сыснасен йышĕ пĕлтĕрхи çак вăхăтринчен 90 пуç сахалланчĕ, анчах ăна эпир çывăх вăхăтрах хăй вырăнне лартăпăр. Çакна валли пирĕн условисем çитеççĕ. Фермăна хĕле хатĕрлесе пысăк юсав ĕçĕсене вĕçленĕ ĕнтĕ. Кулленхи ĕçсене пурнăçласси вара – яланхи ĕç, – терĕ коллектив пурнăçĕпе паллаштарнă май ферма заведующийĕ Л. Яковлева.

Сысна ферминчи пекех, ĕне ферминче те йĕркелĕх хуçаланать. Районта ăçта мĕнле, анчах кунта мăйракаллă шултра выльăхсен йышĕ иртнĕ çулхинче ытларах, ĕнесен кĕтĕвĕ те унччченхи шайрах, сăвăм та кунти хуçалăх çанă тавăрсах укçа-тенкĕшĕн, хуçалăх экономикине вăйлатассишĕн тăрăшни пирки калать.

Тăрăшуллă коллективра ĕç ӳсĕмĕсем те начар мар. Çулталăк пуçланнăранпа Çатракассисем мăйракаллă шултра выльăхсен пĕтĕмĕшле ӳт хушаслăхне 320 центнера, сыснасенне 705 центнера çитернĕ. Çакнашкал ӳкерчĕкре мăйракаллă шултра выльăхсен талăкри вăтам ӳт хушаслăхĕ 465 грампа, сыснасен 359 грампа танлашнинчен тĕлĕнме кирлех-и?

– Çитменлĕхсене пĕлетпĕр, вĕсене пĕтермелли çулйĕрсене курса тăратпăр. Ĕçлекенсен тăрăшулăхĕ пуррине кура ума ларнă тĕллевсене пĕрле сӳтсе явнă хыççăн пурнăçа кĕртме пулатех тесе шутлатпăр, – терĕ кĕр аки пыракан хире васканă май хуçалăх ертӳçи В. Андреев.

Етӳçĕ сăмахĕсене выльăх патĕнче ĕçлекенсем кăçал мĕн чуль пăрупа сысна çури илни те çирĕплетет. Çулталăк пуçланнăранпа Çатракассисем 136 пăру (çав шутра ĕнесенчен 99 пăру) тата 1085 пуç сысна çури илнĕ. Сысна çурисене пĕлтĕрхинчен ытларах илессипе (259 пуç) районта Суворов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕпе танлашакан çук.

Ял хуçалăх производство кооперативĕсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче обществăлла выльăх-чĕрлĕх фермисене хĕле хатĕрленине тĕрĕслес ĕç малалла пырать.

**Анатолий БЕЛОВ.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**



**Талăксерен вăтамран 360 грамм ӳт хушакан сыснасем хĕл кунĕсенче те продуктивлăха чакарас çукки хуçалăх ĕçĕпе паллашсан аван курăнать, малашлăх тĕллевсем çуратать.**



**Илемлĕ тынашкасем пулас тухăçăн никĕсĕ пулса тăраççĕ. Вĕсене наука ыйтнă пек хĕл каçарасси – Çатракассисен паянхи тĕллевĕ.**

Астăвăм

# Курск пĕккинчи çапăçусем асран каймаççĕ

Хăнăхнă йăлапа каçхине-ирхине те пире чăваш телевиденийĕпе паракан передачăсене пăхма яланах кăмăллă. Çĕнни, республикăмăр мĕнле пурăнни унта алă тупанĕ çинчи пекех курăнать. Чир питех аптăратман чух пĕррехинче Шупашкара кайрăм та чукун çул станцийĕнче тăратăп. Акă Мускав – Шупашкар фирма пуйăсĕ килсе чарăнчĕ. Кĕтсе илме пухăннă çынсем чечек кăшăлĕсемпе вакунсем патне хыпаланса утни манăн куçа питĕ илĕртрĕ. Камши? Мĕнле чаплă çынна кĕтсе илеççĕ-ши кусем тесе шухăша кайрăм. Нумай та вăхăт иртмерĕ, вакун алăкĕ уçăлчĕ. Унтан чылай ватă çынсем аннине курсан, вĕсене ачисемпе мăнукĕсем чыслăн кĕтсе илнине ăнлантăм.

Пуйăс çинчен анакан ватăсем 65 çул ĕлĕкхи пек вăр-вар мар ĕнтĕ. Паянхи 84-85 çулхи асаттесем, Орелпа Курск пĕккинчи юнлă çапăçусене хутшăнса, Тăван çĕр-шыва фашизмран сыхласа хăварнă салтаксем. Вăл вăхăтра 18-20 çулсенче пулнă яш каччăсем сахал-и пуç çийĕн чĕрĕ ӳт шыраса вĕçсе иртекен пульăсемпе снаряд-бомба ванчăкĕсен «юррине» итленĕ. Çав вут-çулăм витĕр тухса ачисемпе мăнукĕсем валли ирĕклĕх сыхласа хăварнă паянхи ватăсем ун пек чыс-сума тивĕçех ĕнтĕ. Вĕсене курсан чун хурланчĕ, ирĕксĕрех вĕри куççуль юхса анчĕ. Кунпа пĕрлех 65 çул каяллахи çамрăклăх, 1943 çулхи июлĕн 4-мĕшĕнче тул çутăлас умĕн 3-мĕш гварди танк корпусĕн командирĕ, пире чыслăн кĕтсе илсен, кĕçех малти линие йышăнма хушу пулни куç умне тухрĕ. Мана, паллах, малти линире пулмах тӳр килмерĕ, мĕншĕн тесен мана штаб корпусĕ çумне çыхăну офицерĕпе çӳреме çирĕплетрĕç. «Ку вара окопра выртнинчен те ответлăрах ĕç», – терĕ çӳллĕ офицер. Малти линире кăнтăрла, сайра-хутра пулин те, перкелешӳ час-часах тухатчĕ. Каç енне вара нимĕçсем вĕçĕмех ракетăсем яратчĕç. «Хăйсем патне пирĕн салтаксем йăпшăнса пырасран шикленеççĕ», – тетчĕç кунта маларах килнĕ салтаксем çакăн вăрттăнлăхне уçса.

65 çул иртсен хăйсем çапăçнă вырăнсенче пулса курнă ветерансен чунĕсем, паллах, хурланнă, уйрăмах çапăçура юнашар пулнă юлташĕсем çĕр-шыв ирĕклĕхĕшĕн çавăнтах выртса юлнисене аса илсен. Вĕсене çакнашкал чыс туни ветерансемшĕн çеç мар, вĕсен ачисемпе мăнукĕсемшĕн те пысăк награда тесшĕн эпĕ. Анчах пур çĕрте те çар комиссариачĕсем ветерансемпе вĕсен ачи-мăнукĕсене çак чыспа тивĕçтерчĕç-и-ха? Çук. Ку вара кашнинех шухăшлаттармалла. Иртнине манаканăн малашлăхĕ çук.

65 çул ĕлĕкрех шăрăх çанталăк тăратчĕ. Апла пулин те ялсем çуннипе, çапăçу хирĕнче тăшманăнни пекех пирĕн танксемпе бронемашинăсем тупăшса çуннипе тӳпери хĕвел те тĕтĕмсĕрĕм витĕр хĕрлĕ çаврашкан кăна курăнатчĕ. Çак вăхăтра 11 кун вилĕмпе куçа-куçăн никам çурăмĕ хыçне пытанмасăр вăрçă вут-çулăмне куçран пăхнă ветерансем хăйсем пирки маннине паян сивлеççĕ.

Çак çапăçусенче июлĕн 15-мĕшĕнче нимĕçсем ирхи вĕçевре пăрахнă бомбăн пĕр ванчăкĕ ман урана та айккинче хăвармарĕ. 45 кун хушши сипленнĕ хыççăн – каллех фронта. Дон юханшывĕ урлă каçакан кĕпере 1944 çулхи март уйăхĕ вĕçлениччен зенитчик пулса сыхланă хыççăн Коршук-Шевченковск патĕнчи çапăçусенче чылаях хавшанă 58-мĕш стрелковăй дивизин 270-мĕш полкĕнче пулма тӳр килчĕ. 76 миллиметрлă тупăпа Хĕвел анăç Украинăран пуçласа нумай юхан шывсем урлă каçса сахал ял-хуласене ирĕке кăлартăмăр-и? Тупăн замковăйĕнче те, наводчик пулса та, тупă командирĕнче те хаяр çапăçусене сахал мар хутшăнма тиврĕ. Тĕрлĕ çапăçусенче нимĕçсем пирĕн виçĕ тупăна ватма пултарчĕç. Анчах эпир малтан мала талпăнтăмăр. Берлин хулине илнĕ чух нимĕçсенчен туртса илнĕ туппипе хăйсене хирĕç çапăçрăмăр. Ун хыççăн та çав трофейпах Карпат тăвĕсем урлă каçса Чехословакин тĕп хулине – Прагăна ирĕке кăлартăмăр. Çĕнтерӳ кунне те çав тупăпах кĕтсе илни мĕне тăрать тата!

Фронтри пурнăçра, ытти вăрçă участникĕсем пекех, мана та партипе правительство чыс тумасăр хăвармарĕ: пĕр Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе, икĕ хутчен Мухтав орденĕсемпе, Берлина тата Прагăна ирĕке кăларнăшăн, фашистла Германие çĕнтернĕшĕн медальсемпе наградăларĕ. 1984 çулта тивĕçлĕ канăва тухсан эпĕ персоналлă пенсионер пулса тăтăм.

Кăçал Курск пĕккинчи çапăçусем 65 çул тултарнă май пирĕн районти çар комиссариачĕ пире çавăнта хутшăнтарма мĕншĕн май çитереймерĕ-ши? Пуйăс çинчен анакан ветерансем çине пăхсан куçа хупатăп та çав вăхăтри хаяр çапăçусем куç умне тухаççĕ. Ăна ниçта çырса-каласа пама май çук. Аса илетĕн те пит çăмартисем тăрăх ирĕксĕрех вĕри куççуль юхса анать...

**И. ВАСЮХИН, Курскпа Орел пĕккинчи çапăçусене хутшăннă салтак.**

Патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕнчен

# Ачасем, çул-йĕр тата тимлĕх

Районăмăрăн хисеплĕ çыннисем! Чăваш Республикин Шалти ĕçсен министерствин патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн управленийĕн кăтартăвне пурнăçласа çу кунĕсенче шкул ачисен автоçулсем çинче çӳрес хăнăхăвĕ хавшанине пĕтерес тĕллевпе вĕсем шкула çӳрекен çулсем çинче «2006-2012 çулсенче çул-йĕр хăрушсăрлăхне ӳстересси» федераллă тĕллевлĕ программăпа килĕшӳллĕн августăн 18-мĕшĕнчен пуçласа сентябрĕн 14-мĕшĕччен район территорийĕнчи автоçулсем çинче милицин участоксенчи уполномоченнăйĕсемпе, çул çитмен ачасемпе ĕçлекен пай инспекторĕсемпе, вĕрентӳ пайĕн специалисчĕсемпе, вырăнсенчи ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсемпе, пĕтĕм Раççейри пекех, эпир те «Асăрханăр – ачасем!» тĕллевлĕ профилактика ĕçĕ ирттертĕмĕр. Мĕн кăтартрĕ-ха çак операци?

Тĕллевлĕ профилактика ĕçĕ иртесси пирки маларахах пĕлтернĕччĕ пулсан та, нумай водитель çак йĕркесене пăхăннине пăхмасăрах çул-йĕр хăрушсăрлăх правилисене ачасем умĕнче пăхăнманнисем те пулчĕç. Анчах çак уйăхлăхра пĕтĕмĕшле пысăк хăрушлăхсем пулмарĕç. Кăçал çăва тухнăранпа вара район территорийĕнче шкул ачисемпе тата шкул автобусĕсемпе çыхăннă 8 авари пулса иртрĕ.

<u>Çу уйăхĕн 17-мĕшĕ.</u> 23 сехетре Муркашри Чапаев урамĕнче Шуркассинче çуралса ӳснĕ П. Троицкий Фольцваген-Пассат автомашинăпа 13 çулхи арçын ача çине пырса кĕнĕ. Ача сурансемпе больницăна лекнĕ.

<u>Çу уйăхĕн 18-мĕшĕ.</u> Турай ял тăрăхĕнчи Кĕçĕн Чурашра 9 сехет те 45 минутра çак ялти 19 çулхи каччă Н. Казаков Ява-530 мотоциклпа, çул-йĕр правилисене пăхăнмасăр çӳренĕрен, Анаткассинчи шкул-сада çӳрекен ачана амантать.

<u>Çĕртме уйăхĕн 10-мĕшĕ.</u> Шарпаш ялĕ çывăхĕнче Шкода Октавия автомашина хуçи (Çатракассинче пурăнать) Б. Яковлев хирĕç çул çине тухса кайса 9 çулхи велосипедиста пырса çапать. Ача больницăна лекет.

<u>Çĕртме уйăхĕн 15-мĕшĕ.</u> Лантăш ялĕ тĕлĕнче 20 çулхи А. Толикин ВАЗ-2110 автомашина рулне тытса чараймасăр хирĕç килекен çул çине тухса кайса ВАЗ-2099 автомашинăпа çапăнать. Пĕр çын вилет, 6-ăн больницăна лекеççĕ.

<u>Утă уйăхĕн 17-мĕшĕ.</u> Çуткӳл ялĕ çывăхĕнче Турайри вăтам шкулта 8-мĕш класра вĕренекен А. Яковлев правасăрах «Восход-3М» мотоциклпа çула тухса çул хĕрне çаврăнса ӳкет, больницăна лекет.

<u>Утă уйăхĕн 28-мĕшĕ.</u> Мускав – Ĕпхӳ автоçул çинче çул-йĕр правилисене пăхăнманнипе Чулхула водителĕ 5 çулхи хĕр ачипе больницăна лекет, мăшăрĕ вилмеллех аманать.

Пулнă аварисен хăш-пĕр тĕслĕхĕсемпе çеç паллаштартăмăр, анчах вĕсен тĕслĕхĕнче те çул-йĕр хăрушсăрлăхĕн правилисене пăхăнасси малти вырăнта тăни пирки иккĕленӳ çук. Çул çинче аслисемпе пĕрлех ачасем те пуррине пĕр водителĕн те манас марччĕ. Çакнашкал аварисем малашне сахалрах пулассa шанас килет.

**А. ЩЕРБАКОВ, патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн районти инспекторĕ.**

Пахчаçăсене пĕлме

# Авăн уйхĕн хăйне евĕрлĕхĕ

***Авăн уйăхĕнче пахчара ытларах мĕн тумалла тата мĕнле ĕçлемелле?***

**С. СОРОКИНА.**

Вăхăт уттипе тан пыракан хресчен пахчари ĕçсенче те çут çанталăк улшăнăвĕнчен пит юлсах пымасть. Пачах урăхла, кунти ĕçсене те çут çанталăк улшăнăвĕсемпе тан йĕркелесе пыма тăрăшать вăл. Уйăх çаврăнăшне, вăл катăлни-тулнине пăхса ĕçлесе пыракан тăвакан ӳсĕмсенчен кашниех тĕлĕнет, тăвайманни вара ăмсана-ăмсанах кӳршин ĕç вăрттăнлăхне шырама пуçлать. Çак уйăхри хăш-пĕр ĕç вăрттăнлăхĕсемпе паллаштарар-ха паян вулакансене.

Нумай вăхăт упрама е консервлама пахча çимĕçе е улма-çырлана уйăх катăлса пынă вăхăтра (авăнăн 15-19-мĕшĕсенче) кăна пухăр. Уйăх тулнă кун (авăнăн 15-мĕшĕ) ӳсен-тăранăн çĕр çинчи пайĕсене тĕкĕнмесен аван. Çĕнĕ уйăх тухнă чух (авăнăн 29-мĕшĕ) ӳсен-тăранăн тымарĕсене тивме юрамасть.

Гороскоп тăрăх уйăх Пулăсен тапхăрĕнче (авăнăн 13-15-мĕшĕсем) пулнă чух тухăça пухмасан аванрах: унăн тути шывак пулать, вăл хăвăрт çĕрет.

Уйăх Сурăхсен тапхăрĕнче чухне (авăнăн 16-17-мĕшĕсем) тăпра кăпкалатма, ӳсен-тăрана пĕрĕхме, çум çумлама, улма-çырла тĕммисене апатлантарма, чечексем касма меллĕ тапхăр.

Уйăх Вăкăр тапхăрĕнче (авăнăн 18-19-мĕшĕсем) чух тымар çимĕçсене удобрени хывма юрать.

Уйăх Йĕкĕрешсен тапхăрĕнче пулнă вăхăтра (авăнăн 20-21-мĕшĕсем) чечексем касма, ытлашши хунава иртме, ватă та чирлĕ ӳсен-тăрана пĕр çĕре пухса çунтарма пултаратăр.

Уйăх Рак тапхăрĕнче пулнă чухне (авăнăн 22-23-мĕшĕсем тата авăнăн 24-мĕшĕнче кăнтăрлаччен) ӳсен-тăран лартма, куçарса лартма меллĕ тапхăр.

Уйăх Арăсланра чухне (авăнăн 24-мĕшĕнче кăнтăрларан пуçласа авăнăн 25-26-мĕшĕсем) чечексем касма, тăпра кăпкалатма, усăсăр хунавсене иртме юрать.

Уйăх Хĕр тапхăрĕнче (авăнăн 26-28-мĕшĕсем) пулнă вăхăтра тухăça пухни, ытти ял хуçалăх ĕçĕсене туни усăллах пулмасть.

# Çĕнĕ уйăх пулăшать

***Уйăх тулни-катăлни пахчаçă ĕçĕнче витĕм кӳрет-и?***

**А. ШИРОКОВ.**

Вăйлă çумăр е пăрлă çумăр нумай чухне йывăç-тĕме, чечексене сахал мар сиенлет. Енчен те çакнашкал çанталăк Тулли Уйăхра пулсан, ӳсен-тăран хăвăрт çĕрме пуçлать, типсе хăрать.

Сиенленнĕ туратсене Çĕнĕ Уйăх умĕн кăшт маларах е Çĕнĕ Уйăхăн кассан йывăç-тĕме çăлма пулать.

Çапла вара çирĕп астуса юлăр: типе пуçланă е чирлекен кирек епле ӳсен-тăрана та Уйăх катăлса пынă чух (4-мĕш фаза) е чи лайăх вăхăтра – Çĕнĕ Уйăх кун – турат вĕçĕсене кассан, йывăç-тĕмсене тĕлĕнмелле майпа çăлса хăварма пулать.

Çак меслетпе тĕрĕс мар е йĕркеллĕ мар çитĕнекен ӳсен-тăранпа ĕçленĕ чух та усă курма юрать. Вĕсен тăррисене Çĕнĕ Уйăх тухнă кун касăр кăна – ӳсен-тăран чĕрĕлнинчен хăвăр та нумай вăхăт тĕлĕнĕр.

**«Сад и огород» хаçатран.**